Пушар хуралĕн тĕллевлĕ тĕрĕслевĕ мĕн кăтартрĕ?

# Йĕркене пăхăнсан, лару-тăру хăратмасть



Вут-çулăм тетте маррине кулленхи пурнăç çирĕплетсех тăрать. Ирĕке кайнă “хĕрлĕ автан” кӳнĕ инкексем пирки массăллă информаци хатĕрĕсем те пĕлтерсех тăраççĕ. Пĕри тепринчен хăрушăрах. Акă, иртнĕ çулхи декабрĕн 9-мĕшĕнче Мускавра 17-мĕш номерлĕ наркологи больницинче тухнă пушарта 45 çын пурнăçĕ (43 пациент тата больницăн 2 сотрудникĕ) татăлчĕ. Çав кунах Тверь облаçĕнчи психоневрологи интернатĕнче пушар тухрĕ. Медиксемпе пушарнăйсен вăхăтлă ĕçне кура 303 пациента оперативлă эвакуацилеме май килнĕ. Декабрĕн 10-мĕшĕнче Кемер облаçĕнчи Тайга хулинче те психоневрологи интернатĕнче пушар тухрĕ. Ирĕке кайнă вут-çулăм ытамĕнче 9 çын пурнăçĕ татăлчĕ, 15-ĕн аманчĕç. Мĕн курăнать-ха çак пушарсем хыççăн? Пушар пирки пушар хуралне вăхăтра пĕлтерейменни, эвакуаци çулĕсене “питĕрсе” лартни, эвакуаци çулĕсемпе чӳречесем çинче тимĕр решеткесем пулни, пӳлĕмсемпе эвакуаци çулĕсене ДСП-па тата пластикпа хăт кĕртни, пушар тухсан персонал тĕрĕс мар ĕçлени, харпăр хăй хӳтĕлев хатĕрĕсем çукки, пушара тупса палăртмалли тата сӳнтерме пуçламалли автоматика системисем пулманни пысăк çухатусене çаврăнчĕ.

Юлашки 3 çулта Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану тата Вĕрентӳпе çамрăксен политикин министерствисен учрежденийĕсенче 41 пушар пулчĕ. Анализ çакна кăтартрĕ: электрооборудование йĕркелес тата унпа усă курас правилăсене пăсни, электричествăпа хутса ăшăтмалли приборсемпе усă курас правилăсене пăхăнманни, пирус туртнă чух асăрханусăр пулни.

Çӳлерех асăннă инкексем пулнă хыççăн пирĕн патăмăра та çынсем çĕр каçма юлакан объектсене тĕллевлĕ тĕрĕслеме хушу килчĕ. Пирĕн район территорийĕнче вĕсем 8: “1№ районти тĕп больница”, “2№ районти тĕп больница”, Турайри участок больници, Мăн Сĕнтĕрти тата Турайри ветерансен çурчĕсем, ачасене ревматизмран сыватакан “Лесная сказка” республикăри санатори, Шомикри психоневрологи интерначĕ, ватă çынсемпе инвалидсен Йӳçкассинчи интернат çурчĕ. Тĕллевлĕ тĕрĕслевпе кашни объектрах пултăмăр.

Тĕрĕслев пĕтĕмлетĕвĕсемпе кашни организаци ертӳçинех асăрхаттаруллă хушма предписанисем патăмăр пулсан, уйрăм çĕрте çивĕчрех мерăсем те йышăнма тиврĕ. Нумай çитменлĕхсене тĕрĕслевсем вăхăтĕнчех пĕтерме май килчĕ пулсан, электрохуçалăхри йĕркесĕрлĕхсене кура Йӳçкассинчи интернат-çуртăн тата “Алый парус” электрикĕсене административлă майпа ответ тыттарма тиврĕ.

Уйрăм сăмах Шомикри психоневрологи интерначĕ пирки. Кунти лару-тăру ыттисенчен чылай çивĕчрех. Тĕрĕслев вăхăтĕнче интернатра пушар хăрушсăрлăх правилисене пăснă 30 тĕслĕх палăрчĕ. Уйрăмах хăрушшисем: электрооборудовани тата электричествăпа хутса ăшăтмалли приборсем пушар хăрушсăрлăх правилисене тивĕçтерменни, эвакуаци çулĕсене хăмасем çапсах картласа лартни. Тупса палăртнă çитменлĕхсене никĕслесе интернат директорĕ тĕлĕшпе административлă ĕç пуçарма тиврĕ.

Асăннă тĕрĕслевсем çывăх вăхăтсенче татах пуласси пирки иккĕленӳ çук.

**И. СМИРНОВ,**
**патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн ертӳçи.**

Ветерансем паян та çамрăксемшĕн тĕслĕх

# Гришинсен яшлăх вăрттăнлăхĕ

*Çак ыйтупа районти çар комиссарĕпе А. Малининпа ватă танкист патне çитсе килме çула тухрăм. Вырăна çитрĕм те хуравĕ те нумай кĕттермерĕ. Вăл алă тупанĕ çинчи пекех курăмлă иккен. Хуравĕ сăн ӳкерчĕке сăнасарах пăхсанах курăнать те вăл çамрăксемшĕн тĕслĕх пулса вĕсене пурнăç аталанăвĕн çĕнĕ чиккине хăпарма пулăшассăн туйăнать. Кам мĕнле пулĕ те, анчах çар комиссарĕпе Александр Николаевичпа иксĕмĕр эпир çапла тĕв турăмăр.*

*Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Фаина Николаевнапа Иван Никитич Гришинсем – 39 пине яхăн çынлă районăмăрăн пĕр пайĕ. Пĕр пай пулсан та, çирĕп пай. Çакна ăнлантарни малаллахи сăмахăмăн никĕсĕнче. Кунта сывă пурнăç йĕрки те, вăрăм пурнăç тилхепи те, тарăн тымарлă таса юрату та.*

Сăн ӳкерчĕкри ветерансене пĕрре пăхсах 82-83 çул параймăн та. Çул хисепĕ çавăн чухлине пĕлсен манăн чĕлхем çине ветерансем çамрăклăха епле ку таранччен упраса хăварни пирки ыйту килчĕ.

– Ĕçлемелле, умри ĕçе чуна парса пурнăçламалла, юратса тунă ĕç ĕмĕре тăсать, çамрăклăха упрать. Ĕçленипе пĕрлех эрех-сăраран аякра тăни те – пирĕн пурнăçăмăрта яшлăха тăснин тĕп вăрттăнлăхĕ. Эпир 2 ывăлпа 2 хĕр çуратса ӳстертĕмĕр те паян 5 мăнукпа 2 прамăнук пирĕн пурнăçа илем кӳреççĕ, – пурнăç тути-маси самаях кушăрханă пит çăмартисене кулă кăларса калаçать майăн 28-мĕшĕнче 82 çул тултаракан Фаина Николаевна.

–Пурнăçпа тан пыма тăрăшни те ĕмĕрĕме тăсрĕ пулас. Арăмăн куç япăхрах курнипе пĕрлех манăн та хăлха витĕрех мар. Пурнăçпа тан пырас тĕллевпе паян хамах хаçат-журнал вулатăп, вĕсемсĕр пурăнаймастăп. Мăшăрăм та ĕмĕрĕпех алăран кĕнеке яман, – калаçăва хутшăнчĕ Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин ветеранĕ Иван Никитич. Ăна çак кунсенче 83 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин фронтĕнче мирлĕ пурнăçа сыхласа хăварассишĕн вилĕмпе куçа-куçăн çапăçса çĕнтернĕшĕн тав тăватпăр, татах нумай çул ырă-сывă пурăнма сывлăх сунатпăр.

Ĕç тенĕрен, манăн çĕнĕ пĕлĕшсем тахçанах тивĕçлĕ канура пулсан та, юлашки çулсемччен кил хуçалăхĕнче выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕкĕн пысăк кĕтĕвне тытнă. Иртнĕ çул та вĕсен хуçалăхĕнче сумалли 2 ĕне, йышлă чăх-чĕп пулнă. Сăмах май, туслă мăшăр унччен çулленех ĕнесемсĕр пуçне хур-кăвакал, кăркка тытнă, хăйсем пĕрлешнĕренпе пĕрремĕш кунранах хурт-хăмăр ĕрчетнĕ. Каламалла, Гришинсен çемйинче ĕçпе пĕлĕве мухтанипе пĕрлех хурт-хăмăрпа пыл пысăк хисепре.



– Ялти учитель пулнă атте мана ачаллах вулама-çырма вĕрентнипе пĕрлех çуралсан пĕрремĕш кунранах пыл активтернĕ. Çапла вара кĕнеке-журналпа та кулленхи кашăк пылпа çитĕнтĕм. Ӳссе çитсен комсомолка-стахановка пулса производствăран та, обществăлла ĕçрен те пĕртте пăрăнмарăм. Паян кунччен эпĕ хуçалăх председателĕнче тата грузчикре çеç ĕçлесе курман. Çак çул çинче эрех-сăраран аякра тăни тата пылпа туслă пулни çамрăклăха сыхласа хăварма пулăшрĕ тесе шутлатăп, – калаçăва сыпăнтарса пырса калаçрĕ Фаина Николаевна.

Чăнах та тĕлĕнмелле, анчах манăн çĕнĕ пĕлĕшсене тăххăрмĕш теçеткепе пыраççĕ тесе калаймăн та, 15 çулне пĕр сăмахсăрах “кăларса илме” пулать.

Сывă пурнăç йĕркипе ӳснĕ хĕр çулсем çитсен нумайăшĕшĕн хăта çӳремелли сăлтав пулса тăрать. “12 хăта таран пычĕç”, – тет иртнĕ çулсен вăрттăнлăхне уçса Фаина асанне хăй фронтран таврăннă Иван танкиста суйласа илнине кăмăллăн палăртса.

– Эпĕ качча килнĕ чух кунти çынсем вулама та, помидор çиме те пĕлместчĕç. Пĕрле пухăнсан, ял çыннисене аттерен илсе килнĕ “Огонек”, “Хатĕр пул”, “Капкăн” журналсене вуласа параттăм, саспаллисемпе паллаштараттăм. Паян çав йывăр çулсем историе юлчĕç ĕнтĕ. Çынсем те помидорпа туслашрĕç, – каччă кайнă чух ашшĕ хăйне хурт вĕлли, ĕне, хур парса янине аса илсе каласа парать Фаина Николаевна.

– Йывăрлăх ĕçпе парăнать, ĕçрех çамрăклăх упранать. Паян вара çук текенсене питрен çупас килет. Пурнăç тулли пултăр тесен çичĕ хут тар кăларса иртен пуçласа каçчен ĕçлемелле, – мăшăрне чей тултарма ыйтса калаçрĕ Иван Никитич пĕчĕк блокнот çине темĕн çырса хунине шыранă май. – Çăтмах теççĕ. Çăтмах вăл çĕр çинче кăна. Ун патне ĕçпе кăна çитме пулать.

1947 çулта пĕрлешнĕскерсем сакăр çултан колхоз уйăрса панă 5 сотка çĕр çине уйрăлса тухаççĕ. Пурнăçа аталантарса яма колхоз хăйĕн ĕçченĕсене 5 центнер тырă парать тата хăйсем ĕçлесе илнĕ 9 центнер тырăпа амăшĕ панă ампар, пĕр пĕчĕк сарай – çамрăксен пĕрремĕш пурлăхĕ. Ампар çумне тунă хӳтлĕхре хĕл каçарнă ĕне сивĕре ревматизмпа чирлет те ăна мăшăрсен 100 тенкĕллех сутма тивет. Анчах йывăрлăхсене пăхмасăрах çамрăксем пуç усман. Пурăна-киле колхоз çĕр лаптăкне 30 соткăна çитерсе парать. Ун çинче Гришинсем хăйсен ĕмĕрĕнче 2 пӳрт лартаççĕ, 4 ачана пурнăç çулĕ çине кăлараççĕ.

Фронтран сывă таврăннă салтак-танкист мирлĕ пурнăçра малтанхи 18 çулне конюхра иртterет, вăрçă вăхăтĕнче 15 лашана юлнă витене 160 янаварпа тултарать.

– Лашасем вĕсем питĕ ĕçчен те туйăмлă чĕрчунсем. Хăйсене юратнине хăвăрт сисеççĕ вĕсем. Чирлĕ лашасене хамăрах сывататтăмăр, харсăр лашасене уйрăммăн сĕлĕ тата утă парса алла хăнăхтараттăмăр. Мăшăрăм килти çĕр улмине сутма кайсан, хăйĕн вырăнне конюха хăваратчĕ те, çав усал ăйăрсенех хам кӳлеттĕм, – терĕ Иван асатте пуçланă сăмахпа килĕшсе Фаина асанне.

Паттăр танкистăн мирлĕ пурнăçри ĕç фронтĕнчи сумлăхĕ лаша кĕтĕвне ӳстерни çеç мар. Кунта 18 çул ирттерсен, Иван Никитич хуçалăх председателĕ С. А. Афанасьев ыйтнипе 17 вĕллене юлнă утара ертсе пыма пуçлать. Мĕн тетĕр? Мăшăрĕ пулăшнипе тата хăй тăрăшнипе утар кĕçех 120 вĕллерен иртет. Утар ĕçĕ районшăн кăна мар, республикăшăн та, Мускавшăн та ырă тĕслĕх пулса тăрать.

– Паян лайăх пурăннине ăмсанаççĕ. Çакă пире тĕлĕнтерет. Эпир ĕлĕкхи модăпа пурăнатпăр. Ĕлĕкрех-çке мĕн пур ĕçе кӳршĕсемпе тăваттăмăр. Халĕ çак ен манăça тухма пуçларĕ пулас, анчах эпир кӳршĕсене пулăшассине иккĕмĕш вырăна хăвармастпăр. Кунпа пĕрлех эпир хамăр ĕмĕрте уншăн-куншăн çынна вăрçса çӳремен, кирлĕ-кирлĕ мар сăмах каламан. Ĕçленĕ вăхăтра пуçтарăнса тăрса юмах ярса вăхăта ирттермен, – терĕç Гришинсем хамран уйрăлса юлнă май.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

Юн кунсенчи рубрика

# Саккун вăл пуриншĕн те пĕрре

**РЕДАКЦИРЕН: иртнĕ çул пĕр хушă «ĕçленĕ» рубрикăна паян тепĕр сывлăш паратпăр. Вулакансемшĕн ку хаçат енчен Çĕнĕ çул парни пултăр. Вăл интереслĕ пуласси Сирĕнтен те килет, хисеплĕ вулаканăм. Апла пулсан Сирĕнтен прокуратура ĕçченĕсенчен мĕн пĕлесси пирки ыйтусем кĕтетпĕр: ыйтусем пулсан е хаçат редакцине кĕрсе тухăр, е 2-11-38 телефонпа шăнкăравлăр. Пĕр ыйту та хуравсăр юлмĕ.**

***Паянхи рубрикăна район прокурорĕн пулăшаканĕ, юстици советникĕ Юрий Мефодьевич СЕМЕНОВ ертсе пырать.***

## Кĕвĕçӳ ырри патне çитермест



**2006 çул хыçа юлнă май пĕлес килет: пĕлтĕр çын пурнăçне хирĕç тунă уйрăмах йывăр преступленисен тĕп сăлтавĕсем ăçта тымар яраççĕ тата нумай-и кун пек преступленисем районта?**

**В. ИВАНОВ,**
**А. АЛЕКСАНДРОВ.**

Ыйту паракансен пăшăрханăвне ăнланатăп. Çапла, пур вĕсем. Анчах вырăнсенчи ял тăрăхĕсем тата милицин участковăй инспекторĕсем тăрăшуллă та пуçаруллă пулнăран пĕлтĕр Муркаш Енре çын вĕлерессi чакрĕ: унччен пулнă 7 тĕслĕхрен виççĕне юлчĕ. Çапах та кун пек преступленисем сахалланнă тени те лăпланмалли сăлтав мар. Çулталăк хушшинче çынна хĕнесе амантассипе, вĕлерессипе хăратнă хыççăн пуçарнă уголовнăй ĕçсем нумайланни обществăра саккуна пăхăнассипе тумалли ĕçсем чылай пулни çинчен калать.

Халĕ манăн обществăра йăлара час-часах тĕл пулакан пĕр сăлтав çинче никĕсленнĕ уйрăмах йывăр пĕр преступлени çинче чарăнса тăрас килет. Кĕвĕçӳ. Юратупа пĕр урапа çинче пыракан çак пулăм юратăва кăна мар, çын пурнăçне те татма пултарать.

Иртнĕ çулхи сентябрĕн 10-мĕшĕ. Ваçкассинчи Л. Петров гражданин ӳсĕр пуçпа хăйĕн килĕнче кĕвĕçӳ никĕсĕ çинче арăмĕпе хирĕçӳ пуçлать. Л. Петров гражданин мăшăрне йывăр сиен кӳрес тĕллевпе Н. Петровăна темиçе хутчен чышкăпа пуçран çапать. Хĕрарăм урайне ӳксен те арçын хăйĕн хĕрӳлĕхне чакармасть: пуçран тата кĕлеткен ытти пайĕсенчен нумай хут тапса-çапса пĕтерет, пуçран йывăр амантать, темиçе аяк пĕрчине хуçать т. ыт. те. Л. Петров гражданинăн йĕркерен тухнă ĕçĕсене пула Н. Петрова гражданка темиçе сехетрен çапăçу-харкашу вырăнĕнчех пурнăçран уйрăлать.

Ку ĕç пирки кĕçех суд пулмалла. Сăмах май, пĕлтĕрхи декабрь уйăхĕнче Л. Петровăн кĕçĕн ывăлĕ те ӳсĕрле тепĕр çын пурнăçне татрĕ.

## Условнăй майпа айăпласан...

**Район судĕнче час-часах условнăй майпа айăплани пирки илтме пулать. Преступникшĕн çакă çăмăл айăплав мар-и?**

**И. СИДОРОВА.**

Суд вăл – саккун çулĕнчен пăрăннă çынна тӳрĕ çул çине кăлармалли йĕркен пĕр пайĕ. Çакна шута илсе суд йĕркене пăсаканăн айăплав виçине пăхса ăна юсанма условнăй вăхăт парассине те шута илет. Кун пек чухне суд йышăнăвĕ йĕркене пăснă гражданина тĕрĕслев вăхăчĕ парать тата ун çине хăш-пĕр тивĕçсем хурать: ĕçе вырнаçмалла, обществăлла вырăнта хăйне йĕркеллĕ тытмалла, пурăнмалли вырăна улăштармалла мар т. ыт. те. Çакна пăхăнмасан айăплă çын ĕçне уголовнăй ĕç тăвакан инспекци йышăннипе суд тепĕр хут пăхса тухать. Енчен те инспекци пуçарăвĕ судра çиеле тухать пулсан, йĕрке пăсакана ирĕкрен хăтараççĕ.

Маларах каланине çирĕплетекен пĕр тĕслĕх. Çын хуралтине саккунсăр майпа кĕрсе тата хăратса 5088 тенкĕлĕх пурлăх вăрланăшăн 1977 çулта çуралнă Н. Синичкина тĕлĕшпе пуçарнă уголовнăй ĕçе енсем мирлешнине шута илсе 2003 çулхи августăн 13-мĕшĕнче преступнике 3 çуллăх условнăй айăплав парса вĕçленĕччĕ. Анчах Хорнуй хĕрарăмĕ Н. Синичкина çак çăмăллăхпа туллин усă курма пĕлеймерĕ. Суд хăйĕн çине хунă тивĕçсене пăхăнмасăр хайхискер тăтăшах эрех ĕçсе çӳрерĕ, ĕçе вырнаçма шутламарĕ т. ыт. те. Çапла вара ăна иртнĕ çулла ирĕкрен хăтарма тиврĕ.

2006 çулта маларах асăннă евĕр тĕслĕхсем районта 50 пулчĕç.

## Тĕслĕ металл мыскари

**Рынок хутшăнăвĕсем аталаннă май унччен нумай йăваланса выртнă тĕслĕ металл та укçа çăл куçĕ пулса тăчĕ. Правуртараххисем ăна уйрăм çын хуçалăхне е предприятие кĕрсе те йăкăртма пултараççĕ. Мĕнле айăплав кĕтет вĕсене тата пур-и ун пек айăпланнисем?**

**В. КОЛЬЦОВА.**

Хуравлатăп: «Пур тата пĕрре-иккĕ те мар. Пĕр тĕслĕхпе çеç паллаштарам. Пĕлтĕрхи августăн юлашки кунĕсенче Мăн Сĕнтĕрте пурăнакан 18 çулхи Е. Александровпа 15 çулхи С. Коновалов малтан калаçса татăлса Сĕнтĕрти юсавпа техника предприятине саккунсăр кĕрсе кунти ĕçлемен котельнăйран электропралуксем тата икĕ электродвигатель 38200 тенкĕлĕх йăкăртса тухнă. Суд вĕсен “ĕçне” РФ Уголовнăй Кодексĕн 158-мĕш статйин 2-мĕш пайĕн “а,б” пункчĕсемпе квалификацилерĕ. Çамрăксем тунă преступление пăхса тухса суд А. Александрова 1,6 çуллăха, С. Коновалова 1 çуллăха ирĕкрен хăтармалла турĕ. РФ УК 73 статйипе иккĕшĕнне те айăплава çулталăклăх условнăй тесе йышăнчĕ. Куратпăр, суд вĕсене тӳрленме май пачĕ».